## Редакци тĕпелĕнче – Г. Волков академик

Хăйĕн 80 çулхи юбилейĕ умĕн «Халăх шкулĕ – Народная школа» журнал редакцине паллă ăсчахăмăр Г.Н. Волков академик кĕрсе тухрĕ. Кĕрсе тухрĕ çеç тени тĕрĕсех те мар-ха, кĕтнĕ тĕлпулу темиçе сехетех тăсăлчĕ. Ара, Геннадий Никандрович пирĕншĕн тĕнчипе паллă этнопедагог çеç мар, журналăмăрăн редколлеги членĕ те, çавăнпа журналистсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе те интересленчĕ. Мухтамалли тупăнсан – ырă сăмахне калама манмарĕ, çитменлĕхсене асăрхасан – аслă юлташ вырăнне пулса кӳрентермесĕр, шахвăртса канашсем пачĕ.

Мухтавлă ентешĕмĕрпе тĕл пулнă май эпир те, педагогика журналне калăплакансем, унăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе кăсăклантăмăр.

**– Геннадий Никандрович, çулсен хисепĕ ӳссе пынă май "Пурнан пурнăçра тĕрĕс утăмсемех турăм-ши эпĕ?" текен ыйту чунăрта канăçсăрлăх çуратмасть-и?**

– Питĕ анлă ыйту лартатăн эсĕ, шăллăм, – аслă пичче пек сылтăм аллине хулпуççи çине хурса, куçĕсемпе ман çине ăшшăн пăхса хуравларĕ академик.– Çĕршыв ман çитĕнӳсене тивĕçлипех хакларĕ. Чыс-сум çителĕклех. Çакна шута илсен хам шăпана ырламалла пек. Анчах та эпĕ, турă тепĕр ĕмĕр парнелес пулсан, пурнăçăма кăштах улăштарнă, урăхларах утăмсем тунă пулăттăм...

**– Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче сана республикăри парти функционерĕсем тата КГБ органĕсем тăрăшнипе айăпсăр айăпласа, "националист" ярлык çакса Чăваш енрен уйăрнăччĕ. Çавна шута илсе çапла калатăр-и?**

– 70-мĕш çулсем пирки аса илтĕн пулсан çакна каласа хăварам. Эпĕ Иван Яковлева халалланă наука сессийĕнче çавăн пек прогноз тунăччĕ: "Чăваш йышĕ чакса, наци кăмăлĕ сӳнсе пырать. Шанчăк хамăрта кăна. Çĕкленес тесен тутарсем пек ырми-канми ĕçлемелле". Çавăнтан пуçланнăччĕ ун чухнехи пăтăрмахсем. Чун ыратнăран каланă сăмахсем темшĕн «çӳлтисене»

килĕшмен. Шупашкартан куçса каймалла пулчĕ. Мускав вара мана хапăлласах йышăнчĕ. Мĕн пулни пулнă пулĕ. Маншăн "тăрăшакансене" эпĕ пурне те каçарнă. Тахçанах...

Паян ытларах лайăххи çинчен шухăшлатăп. 70-мĕш çулсенче мана хӳтĕлекенсем те чылай пулчĕç. Сăмахран, Иван Андреевич Андреев профессор пединститутра иртнĕ пухура хăраса тăмасăрах тухса калаçрĕ. Пурте элекçĕсем пулман вĕт-ха, тус-юлташсем те пулнă – çавă савăнтарать, пурăнма хавхалантарать.

Халĕ эсĕ лартнă ыйту çине хуравлам. Çулсем иртнĕçемĕн эпĕ урăххи çинчен ытларах шухăшлатăп: палăртса хунă ĕçсем çав тери нумай, çавсене вĕçлес килет. Шел, вăй-хал чаксах пырать. Чылай маларах пуçăнмалла пулнă хăш-пĕрисене пурнăçлама. Вăхăтпа виçеллĕ усă кураймарăм. Акă шкулта пĕрле вĕреннĕ тус-юлташсене аса илсе кĕнеке çырса пĕтересшĕнччĕ – вĕçлеймерĕм-ха. Эпĕ вĕт класран пĕччен тăрса юлтăм... Тăхăр кĕнеке çырма палăртса хутăм. Вĕсен шутĕнче – аса илӳсен тĕп кĕнеки: иртнĕ кун-çула пĕтĕмлетес килет. Кăçал çулла "Этнопедагогическая пансофия"ятлă кĕнекепе виçĕ уйăх ĕçлерĕм – çуррине çеç çитрĕм-ха. Наука ĕçĕсемпе лармаллисем те чылай...

**– Эсĕ кĕнекесемпе çеç çырлахмастăн-ха, лекцисем вулама ют çĕршыва та, Раççейĕн чи аякри регионĕсене те çитме тăрăшатăн...**

– Эпир, чăвашсем – пĕр халăх, пĕр юн, пĕр чун, çав тери çывăх çынсем. Çавăнпа та мана эсĕ "Эсир" мар, "эсĕ" тесе чĕнни чуна лăпкать, шăллăм. Хам ĕмĕрте 50 ытла аслă шкулта лекцисем вуларăм.

Шупашкартисенчен пуçласа МГУпа Сорбоннăри университет таранах. Ман патра вĕренекенсем (аспирантсем. – Авт.) наука докторĕсемпе кандидачĕсем пулса тăчĕç, вĕсен йышĕ çĕртен те иртрĕ пулĕ. Чылай регионсенче ман концепцие тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Якутсем, сăмахран, наци гимназийĕ уçрĕç, Мускавра манăн халăх педагогики çинчен çырнă кĕнекене пысăк тиражпа пичетлесе кăларчĕç. Унăн ячĕ – "Педагогика любви".

**– Якутсен маларахри президенчĕ – Михаил Николаев – асăннă кĕнеке кун çути курнă май çапла каланăччĕ пулас: "Геннадий Волков своими идеями, примером, образом жизни спас якутскую нацию от забвения".**

– Тавах, шăллăм, ырă сăмахушăн. Халăх педагогики – наци чĕрĕлĕвĕн çăлкуçĕ.

**– Эсĕ мана шăллăм тетĕн пулсан, ман сана Кени пичче теес пуль.**

– Кени тенĕрен, чуна ачашлакан çак сăмаха ман асанне – Перасковья Филипповна – тăтăшах калатчĕ. Маншăн вăл пĕрремĕш тата ĕмĕрхи вĕрентекен. Чылай çул каялла пулса иртнĕ пĕр тĕслĕхе çеç аса илетĕп. Эпĕ ун чухне аспирантурăра вĕренетĕп. Чунра тунсăх: сăлтав çукçĕртенех яла каяс килет... Лекцисем хыççăн 40 çухрăм пылчăк çăрса Аслă Елĕке çитрĕм. Чирлĕ асанне мана: "Кени, эпĕ сана ĕнерех кĕтнĕччĕ, – терĕ. Тĕрĕсех вăрканă иккен ман чун: тăван килте кĕтнĕ мана. "Кени, авланма вăхăт çитрĕ, ача-пăчаллă пулмалла", – юптарать асанне.

– Тепĕр çул вĕренетĕп те авланатăп.

– Кама илесшĕн-ха?

–Алянах...

– Савăнтартăн. Тавахсана. Шанчăклă хĕр, ĕмĕтне ан тат. Ыр хыпар хыççăн ман вилме те юрать. Юратса пурăнăр...

– Юратăвĕ иртсен вара?

– Кени, юрату вăл – пĕлĕтре. Пĕлĕт вара вăл – ĕмĕр, – аллисемпе çӳлелле кăтартса хуравларĕ асанне, вара куçне хупрĕ...

Çак сăмахсемшĕнех ăна çĕр çинчи чи сумлă педагогсен шутне кĕртнĕ пулăттăм эпĕ. Анне те – Евдокия Михайловна – çак чыс-хисепе тивĕçлĕ. Вăл 94 çула çитичченех пурăнчĕ. Питĕ ĕçчен хĕрарăмччĕ, виçĕ чĕлхе пĕлетчĕ (çакăншăн ăна ман наукăри туссем уйрăмах хисеплетчĕç). Аттене аса илсен, шкула каяс çул каланă сăмахсем асра. "Ывăлăм, кĕтӳçре çӳренĕ чухне вăрттăн-карттăн турткалани юрĕ ĕнтĕ, шкул ачине вара юрамĕ", – терĕ вăл. Эпĕ пиллĕкренпех кĕтӳ кĕтнĕ пулнă та ытти ачасемпе пĕрле аташкаланă пуль

çав ĕнтĕ. Атте вăрçса-çапса хуçмарĕ, вĕрентсе каларĕ. Сакăрвунна çитрĕм ак, унтанпа пĕрре те туртман, атте сăмахĕнчен иртмен. Сăмах май, ман патра вĕреннĕ аспирантсем пĕри те туртман.

**– Пирĕн журнал шкулсем, вĕрентекенсем валли тухнине шута илсе çавăн пек ыйту та парас килет. Пулас академик миçе çулта çырма-вулама вĕреннĕ?**

– Вулама эпĕ пиллĕкре вĕрентĕм. Вырăс календаре тăрăх. Çырма вара – шкула кайсан. Эпир, арçын ачасем, çыру ĕçĕсем валли хамăр алăпа кив хăмасенчен доска ăсталарăмăр, ăна хура сăрпа сăрларăмăр. Питĕ лайăх астăватăп: вăл хальхи пек тӳркĕтеслĕ пулаймарĕ, материал çитменнипе тăваткăл пулса тухрĕ. Шăпах Каземир Малевичăнни пек хура тăваткăл. (Кулать.) Пурнăçра ман хура тăваткăлпа икĕ хутчен тĕл пулма тӳр килчĕ. Виççĕмĕшĕ ан пултăрах.

Николай Морозов,<br>"Халăх шкулĕ – Народная школа"<br>журналăн тĕп редакторĕ

*Морозов, Н. Редакци тĕпĕлĕнче – Г. Волков академик :[профессорпа калçни] / Н. морозов // Халăх шкулĕ = Народная школа. – 2007. - № 5. – С. 91-92.*